27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
6
ЭРНЕКУН
197(6692) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

КОЛХОЗ СЧЕТОВОЧĔ

Пĕр-пĕр ыйтупа колхоз правленине пыракан колхозник правлени çуртне кĕрсенех чи малтан шут шăрçисем янранине илтет. Пĕр пĕчĕк сĕтел умĕнче колхоз счетовочĕ темĕн шутласа, шут шăрçисене енчен енне сиктерсе ларать, тĕрлĕ кĕнекесем çине темĕн çыра-çыра хурать. Правленине пынă çын чылай чухне çав темĕн шутласа ларакан юлташ çине çавăрăнса пăхмасăрах председатель пÿлĕмнелле иртсе каять. Мĕнех вара вăл — шăрçасене сиктерсе ларасси, тĕрлĕ кĕнекесене уçа-уça хупасси! Вăл ĕнтĕ суха тăвассинех мар вĕт-ха!

Çапла хаклаççĕ хăшпĕр чухне колхоз счетовочĕн ĕçне. Çавăнпа вара счетоводсен ĕçĕпе интересленмеççĕ, вĕсене пухса каласмаççĕ, вĕсем çырса пыракан кĕнекене уçа-уçа пăхса тĕрĕслемеççĕ. Кам мĕнле пултарать—çавăн пек ĕçлет. Питех те тĕрĕс калать Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз счетовочĕ В. Петрянкин юлташ пирĕн редакцине янă хайĕн çырăвĕнче. Акă мĕн çырать вăл:

«Учет ĕçне тата тĕп кĕнекесем çине çырса пырассине нумай колхозсенче тÿсме çук начар йĕркеленĕ. Документсене вăхăтра çырса, çĕлесе пымаççĕ. Час-часах счетовод ĕçне пĕлмен çынсене лартнă пирки, вĕсем пĕтĕм ĕçе пăтраштарса пĕтереççĕ. Райçĕрĕç пайĕ колхоз счетовочĕсене пухса семинарсем, канашлусем ирттермест. Çавна пула счетоводсем пĕр-пĕрин ĕçĕнчи опытпа усă кураймаççĕ. Райçĕрĕç пайĕн инструктор-бухгалтерсем пур, анчах та вĕсем вăхăта ытларах çĕрĕç пайĕнче ларса ирттереççĕ».

Çакăн пекех тăрать ĕç Шăхасан районĕнче те. Пире А. Чернов юлташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, кунта юлашки çулсенче колхоз счетовочĕсемпе пачах ĕçлемен. Çавна пула шут ĕçне лайăх пĕлекен счетоводсем сахалланнă. Счетоводсене ĕçшĕн тÿлес йĕркене нумай çĕрте пăсаççĕ. Колхозра пурин валли те тунă йĕрке тăрăх ĕçкунĕсем парса ĕçлеттерес вырăнне, Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра счетовода кунне 5 килограмм тырă парса тăраççĕ. Çапла вара çак счетовод кашни уйăхра 150 килограмм, çулталăкра 112 пăт ытла тырă илсе тăрать. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе усă курса пуйса юлма тăрăшакан çавăн пек çынсем татах та тĕл пулкалаççĕ. Район руководителĕсем çакна пĕлеççĕ, анчах та счетоводсем хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Кунта илсе кăтартнă тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: колхоз счетовочĕсен ĕçне хакламан пирки, счетоводсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе япăхтарса янă пирки, колхозсенче нумай тĕрлĕ пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ. Райçĕрĕç пайĕсенче ĕçлекен юлташсен, уйрăмăнах вĕсен заведующийĕсен, çакна шута илес пулать: ялхуçалăх артелĕ вăл пысăк хуçалăх пулнă пирки, унăн пурлăхсем тата укçа-тенкĕ нумай пулнă пирки, унти шут ĕçĕ калама та çук пысăк ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен колхоз пурлăхĕнчи кашни япала, колхозăн кашни килограмм тырри тата кашни пус укçи шутра пулсан кăна вăл вăйлă колхоз пулма пултарать, çапла тусан кăна колхоз пурлăхне саланса пĕтесрен сыхласа усрама пулать. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз балансĕнче пĕр миллион тенкĕ яхăн шутланать. Çакăн чухлĕ тăракан пурлăха колхоз счетовочĕ тĕрлĕ кĕнекесем тăрăх шутра тытса тăрать, кашни кун пулакан улшăнусене тĕрлĕ хутсемпе кĕнекесем çине çырса пырать. Счетовод хăйĕн ĕçне пĕлсе, тĕрĕс туса пырать пулсан, колхоз хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке пулать; счетовод начар ĕçлет пулсан, хуçалăхри йĕрке çинчен вара калаçмалли те çук. Унта пурлăх саланса пырать, ĕçкунĕсем пăтранса пĕтеççĕ, колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ чакать, ĕç дисциплини япăхлакать.

Паллă ĕнтĕ, счетовод пулса ĕçлеме колхоз правленийĕ пĕр-пĕр колхознике лартать е тара тытса ĕçлеттерет. Çавăнпа та счетовод пĕтĕмпех артель правленийĕпе унăн председательне пăхăнса ĕçлет. Артель пурлăхĕсене хăй ăссĕн тыткалама, авансcем пама, фондсене салатма счетоводăн правăсем çук, çав ĕçсене правленипе председатель туса пыраççĕ. Анчах çакă вăл счетовод нимĕншĕн те ответ тытманнине пĕлтермест, счетоводăн ĕçне пĕчĕклетсе хаклама сăлтав памасть. Колхозри учетпа отчет ĕçĕшĕн чи малтан счетовод ответ тытма тивĕçлĕ. Унăн колхозри бригадирсене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсене, учетчиксене, кладовщиксене, подсобнăй хуçалăхсенче ĕçлекенсене тырпулпа выльăх-чĕрлĕх продукцине шута илсе пыма, колхозниксен ĕçкунĕсене çырса пыма вĕрентмелле, çав ĕçсене вĕсем мĕнле туса пынине председатель хушнă тăрăх час-часах тĕрĕслемелле. Колхозниксене ĕç нормисем çинчен, ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен е тата партипе правительство ялхуçалăхĕ пирки йышăннă законсем çинчен ăнлантарса парас ĕçе те счетоводăн активлăн хутшăнмалла. Апла пулсан, счетовод колхоз председательне ĕçре ялан пулăшса тăракансенчен пĕри пулать.

Çакна шута илсен, колхозсем валли счетоводсем вĕрентсе хатĕрлес ыйту чылаях пысăк ыйту пулса тăни уççăнах курăнать. Анчах çапах та, республикăри Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ те, районсенчи çĕрĕç пайĕсем те ялхуçалăх артелĕсенче ĕçлеме счетоводсем вĕрентсе хатĕрлес енĕпе нимĕнех те тумаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче ĕçлеме тытăннă юлташсен пĕлĕвне хăпартас тата счетовод пулса ĕçлеме çĕнĕ çынсем хатĕрлес тĕлĕшпе курссем, семинарсем, канашлусем ирттерни питех те усăллă пулнă пулĕччĕ, анчах çакна çĕрĕç органĕсем шута илмеççĕ.

Кăçалхи ялхуçалăх çулĕ майĕпенех вĕçленсе пырать. Кĕçех колхозсен çулталăкри отчетсене çырса хатĕрлемелле тата килес çулхи производствăпа финанс планĕсене палăртса хумалла пулать. Çав ĕçсем ăнăçлăн пулса иртчĕр тесен, кашни колхозрах хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен счетовод пулни кирлĕ. Çакна ĕнтĕ çĕрĕç органĕсен халех шута илес пулать.

Сăмах майĕн малта пыракан счетоводсен пуçарăвĕ çинчен асăрхаттарса хăварас пулать. Куславкка районĕнчи «Новая жизнь» колхозра счетовод пулса Н. Е. Чернов юлташ ĕçлет. Вăл учетпа отчет ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Кунта колхозниксен ĕçкунĕсем çухалмаççĕ, ĕçкунĕсене кашни 5 кунтах ĕç кĕнекисем çине çырса пыраççĕ. Хăйĕн колхозри ĕçне тирпейлĕн туса пынипе пĕр вăхăтрах, Чернов юлташ иртнĕ çул хушшинче 6 çынна счетовод ĕçне вĕрентнĕ. Вăл кÿршĕри колхозсен счетовочĕсене те вĕрентсе пулăшу парать. Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхоз счетовочĕ В. И. Петров юлташ, çак колхозра 10 çул ытла шут ĕçне туса пыраканскер, Отечественнăй вăрçă инвалидне Ф. П. Доброхотова счетовод ĕçне вĕрентнĕ. Çавăн пекех Чурачăк районĕнчи «Молодая сила» колхоз счетовочĕ Иванов, Первомайски районри «Большевик» колхоз счетовочĕ Хураськин юлташсем те пĕрер çынна счетовод ĕçне вĕрентнĕ. Çак юлташсен пуçарăвне пур майсемпе те ырламалла, вĕсен примерне ытти çĕрте те анлăн сарса пымалла.

Учетпа отчет ĕçне лайăх йĕркелесе ярасси колхоза организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетмелли условисенчен пĕри пулса тăрать. Çавăнпа та вăл ĕçе тÿрĕ кăмăллă тата пĕтĕм вăя парса ĕçлекен çынсене суйласа илсе лартмалла.

И. В. Сталин юлташ США посолне Гарриман господина йышăнни

1944 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕнче **И. В. Сталин** юлташ США посолне **Гарриман** господина йышăннă. Совет Союзне вăрçă хатĕрĕсем тăратасси çинчен çырнă пĕррмĕш протокола алă пусни виçĕ çул тултарнă ятпа Гарриман господин Сталин юлташа США президенчĕн Ф. Рузвельтăн бюстне панă.

Йышăнура **Молотов** юлташ пулнă.

Югославири ирĕклĕх çарĕн миссийĕн начальникне Велимир Терзич генерал-лейтенанта II-мĕш степень Суворов орденĕ пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ октябрĕн 4-мĕшĕнче Кремльте Югославири ирĕклĕх çарĕн миссийĕн начальникне Велимир **Терзич** генерал-лейтенанта II-мĕш степень **Суворов** орденĕ панă. Ăна çав орденпа Совет Союзĕпе Югославин пĕрлехи тăшманне — гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре калама çук чаплă ĕçленĕшĕн тата паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн награлăланă.

Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн представителĕсем Мускавран тухса кайни

Октябрĕн 3-мĕшĕнче Мускавран Польша халăх совечĕн председателĕ Берут господин, Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн председателĕ Осубка-Моравский господин тата А. Витос господин тухса кайнă.

Мускаври аэродромра Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн представителĕсене СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский, Совет Союзĕн Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ çумĕнчи представителĕ генерал-полковник Н. А. Булганин тата ыттисем те ăсатса янă.

Металлургсем фронт валли тимĕр-хурçă кăлараççĕ

Хура металлургин малта пыракан предприятийĕсем сентябрь уйăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Иртнĕ çулхи сентябрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, Хура Металлурги Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем тăрăх чугун шăратса кăларасси 26 процент, хурçă—25 процент, металл прокачĕ тăвасси — 29 процент, кокс хатĕрлесси — 45 процент, руда кăларасси—28 процент ÿснĕ.

Кузнецкри Сталин ячĕпе тăракан комбинат уйрăмах пысăк çитĕнÿсем тунă, вăл планран ирттерсе 5.000 тоннăна яхăн чугун, 1.500 тонна хурçă тата 5.000 тонна прокат панă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем десант операцийĕсем лайăх туса ирттернĕ хыççăн Балтика тинĕсĕнче ХИУМА (ДАГО) утравне туртса илнĕ.

Дрогобыч облаçĕнчи ТУРКА хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе-çĕнтерсе тата унăн инженери чăрмавĕсене çĕмĕрсе-çĕмĕрсе, халăх пурăнакан КАЛЬНЕ, ХУТАР, ТАРНАВКА, КЛИМЕЦ, ЫЗЛУВ, ЛОВОЧНЕ, ОПОЖЕЦ, РЕШИТКА, РОЖАНКА НИЖНА, ВОЛОСЯНКА, РОЖАНКА, ВИЖНА, ЕЛЕНКОВАТЕ ятлă пунктсене тата ЛАВОЧНЕ, БЕСКИД ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем РЕГИН хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата ИДИЧЕЛ, ДЕЛЕНЫ, АЛШО-ИДЕЧ, ОРОСФАЛУ ятлă ялсене йышăннă.

Румынсен ТИМИШОАРА хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕрринче пирĕн çарсем Румынипе Югослави чикки урлă каçса кайнă та, нимĕç çарĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Югослави çĕрĕнче ПЕТРОВГРАД (ВЕЛИКИ БЕЧКЕРЕК) хулипе чугун çул узелне, ВРАШАЦ хулипе чугун çул узелне, БЕЛА ЦЕРКВА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—КЛЕК, ЛАЗАРЕВО, ЯША ТОМИЦ, УЛЬМА, ЯСЕНОВО, ВРАЧЕВ ГАЙ ятлă пысăк ялсем тата АЛЕКСАНДРОВО, ЛАЗАРЕВО, ЧАРЧА, УЛЬМА, ВРАЧЕВ ГАЙ, ЯСЕНОВО ятлă чугун çул станцийĕсем.

Румынсен ТУРНУ-СЕВЕРИН хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, Югослави çĕрĕнче ТОПОЛНИЦА, КЛОКОЧЕВАЦ, РУДНА ГЛАВА, ПЛАВНА, УРОВИЦА, СЛАТИНА, ЯБУКОВАЦ, МАЛАЯ КАМЕНИЦА, ДУПЛЯНЕ, КАРБУЛОВО, ТРНЯНИ, БРЕСТОВАЦ СИКОЛЕ, МЕТРИШ, ГЛОГОВИЦА, САЛАШ, ДУБОЧАНЕ, МАЛА ЯСИКОВА, КОПРИВЕИЦА, РГОТИНА, БЕЛА РЕКА ятлă ялсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Октябрĕн 2-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 11 самолетне персе ÿкернĕ.

ОКТЯБРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем Югославире ВРАШАЦ хулинчен хĕвеланăçнерехре АЛИБУНАР, ВЛАДИМИРОВАЦ хулипе чугун çул станцине тата ДЕБЕЛЬЯЧА, ЦРЕПАЯ, БАНАТСКО-КРАЛЕВИЧЕВО, БАНАТСКО-НОВО СЕЛО ятлă ялсемпе чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

Румынсен ТУРНУ-СЕВЕРИН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, Югослави çĕрĕнче ШТУБИК, ЯСЕНИЦА, ТОПЛА, ОШТРЕЛИ, БОР, БРЕСТОВАЦ, НИКОЛИЧЕВО, ЗВЕЗДАН, ВЕЛИК ИЗВОР, ГРЛЯНЕ, ВРАТАРНИЦА ятлă ялсене тата БРЕСТОВАЦ, ВРАТАРНИЦА ятлă чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. Пирĕн чаçĕсемпе пĕрлешнĕ те вĕсемпе пĕрле районра нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкассишĕн Пирĕн çарсем Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕ Неготин хулинчен хĕвеланăçнерехри районра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 3-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Югослави çĕрĕнче Врашац хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем Алибунар тата Владимировац хулисемпе чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн пехотинецсем çав тери хăвăрт малалла кайнă те Белград хулинчен 24 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Банацко-Кралевичево ялне тытса илнĕ. 350 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Петровград станцийĕнче нимĕçсенчен тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 200 вагон ытла тытса илнĕ.

* * *

Румынсен Турну-Северин хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман, оборонăра тăма лайăх позицисемпе усă курса, хытă хирĕç тăнă. Паян пирĕн çарсем Неготин хулинчен хĕвеланăçнерехре Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрлешнĕ. Пĕрле килĕшсе кĕрешсе, совет тата Югослави боецĕсем Дунай шывĕ çинче ларакан пĕр пысăк ялти нимĕç гарнизонне çавăрса илнĕ те аркатса тăкнă. Ытти участоксенче пирĕн çарсем, ту çинчи çулсемпе, улăхсемпе тата ту хушшисемпе малалла куçса пырса, темиçе ял тытса илнĕ. Кун каçиччен 1.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 12 тупă, боеприпаспа апат-çимĕç склачĕсем, 2 бензин склачĕ, техникăллă çу тиенĕ 4 баржа тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

Югослави халăхĕ пирĕн наступлени туса пыракан çарсене пур майпа та пулăшать. Каялла чакакан нимĕçсем пĕр районра ту çинчи хăвăрт юхакан шыв урлă хывнă кĕпере сирпĕнтерсе янă. Хресченсем хăйсен ирĕкĕпе пуртăсем, кĕреçесем, пăчкăсем илнĕ те кĕпер хывма тухнă. Сивĕ шывра тăрса ĕçлесе, вĕсем виçĕ сехет хушшинче çав кĕпере хывса çитернĕ. Тепĕр районра нимĕçсем Клоков лейтенантăн ротине пулеметсемпе, миномeтсемпе пеме тытăннă. Пирĕн боецсен çĕр çумне выртма лекнĕ. Çав вăхăтра Югослави партизанĕсен ушкăнĕ гитлеровецсем патне тылран йăпшăнса çитнĕ те вĕсене гранатăсемпе вăркăнтарма тытăннă. Унтан Клоков лейтенантăн роти атака пуçласа янă, алă вĕççĕн çапăçса, нимĕçсене аркатса тăкнă.

Югослави çĕрне кĕнĕ совет боецĕсем кашни утăмрах нимĕç оккупанчĕсем тунă хăрушă ĕçсен йĕрĕсене кураççĕ. Фашистла ирсĕрсем пĕр айăпсăр темиçе пин çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Кобишница ялĕнче гитлеровецсенчен асап тÿсмен пĕр çемье те çук. Нимĕçсем хресченсенчен пĕтĕм тырпулне туртса илнĕ, вĕсен ĕнисемпе сурăхĕсене илсе кайнă. Хуласенче гитлеровецсем пур магазинсене те çаратса тухнă. Хулари çынсенчен нумайĕшĕнчен хаклă япалисене тата харпăрхăйне кирлĕ пурлăха туртса илсе турттарса кайнă. Югослави хулисемпе ялĕсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара Югослави халăхĕ чунтан тав туса саламлать.

* * *

Мариамполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет разведчикĕсен отрячĕсем нимĕçсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне, кун каçиччен пирĕн снайперсем 48 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Французсен «Норманди» ятлă эскадрильинче тăракан летчик-истребитель Кюфо капитан сывлăшра нимĕçсен икĕ истребительне тĕл пулнă та вĕсене çавăнтах çав тери хăвăрт атакăланă. Ăста çапăçса, Кюфо капитан тăшманăн икĕ самолетне те персе ÿкернĕ.

* * *

Ломжа хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн разведчиксен ушкăнĕ çĕрле Нарев шывĕ урлă каçнă та нимĕçсен траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Траншейăсенчи нимĕçсен сехрисем хăпса тухнă. Совет боецĕсем пĕр станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă, пĕр блиндажа сирпĕнтерсе янă тата 20 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Унтан пĕр нимĕçе тыткăна илнĕ те пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне тавăрăннă.

* * *

Дрогобыч облаçĕнчи Турка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр чаçри подразделенисем тăшманăн çирĕплетнĕ опорнăй пунктне туртса илнĕ. Тăшман пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. 22 пулемет тата боеприпас складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем çавăрса илмелли ăста маневр тунă та çав вырăнти паха çÿллĕ вырăна туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕн боецсем 2 тупă, 13 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Рига заливĕнче нимĕçсен 2.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейи валли промышленность таварĕсем хатĕрлеççĕ

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейи валли таварсем хатĕрлеме заказсем вырнаçтарса тухнă. Çĕвĕ çĕлекен предприятисем хĕрарăмсем валли хĕллехи пальтосем 600 штука туса хатĕрлеççĕ, вĕсен çухависем хура-хăмăр тилĕ тирĕнчен пулаççĕ, çавăн пекех тата каракуль тирĕнчен 500 манто çĕлесе хатĕрлеççĕ. Бостон йышши материалтан каракуль çухавиллĕ 2000 хĕрарăм пальтовĕ тата 4000 костюм çĕлеççĕ. Кĕркуннепе çуркунне тăхăнмалли пальтосем, шевиот юбкăсем, пурçăн блузкăсем темиçе пин штука тата арçын тумтирĕсем нумай туса хатĕрлеççĕ.

Пир-авăр промышленноçĕ арçынна хĕрарăм костюмĕсем валли бостон, коверкот тата шевиот йышши пусма-таварсем — 40.000 тăрăх тата хĕрарăм платьисем валли пурçăн пусма-таварсем — 10.000 тăрăх хатĕрлесе парать.

Сăмăл промышленность предприятийĕсем хĕрарăмсем валли сыхнă жакетсем — 20.000 штука, хĕрарăм пушмакĕсем—6.000 мăшăр тата арçын пушмакĕсем—4.000 мăшăр туса хатĕрлеççĕ.

Туркменковерсоюза текин тата ахалтекин коверĕсем 2000 штука туса хатĕрлеме заказ панă. Ювелирторга 2000 ылттăн сехет тата 2000 кĕмĕл сехет туса хатĕрлеме хушнă. (ТАСС).

Еçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Хĕрлĕ Чутай районĕ тăрăх

60. **Чапаев ячĕпе тăракан** колхоз (председателĕ **Васильев** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Назаров** юлташ). Ку колхоз 272 гектар çинчи тырра 24 кун хушшинче вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

61. **«Совет»** колхоз (председателĕ **Моксеев** юлташ). Çак колхоз тĕштырăсене августăн 29-мĕшĕнче вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, кĕраки планне 102 процент тултарнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 30 центнер тырă парса хунă.

62. **«Путь к социализму»** колхоз (председателĕ **Сапожников** юлташ). Вăл тырра вăхăтра пухса кĕртнĕ, кĕрхи тырăсене агротехника енчен чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, сентябрь уйăхĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

63. **«Совет»** колхоз (председателĕ **Мехопаров** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Белов** юлташ). Колхоз тырра сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

64. **«Лоба»** колхоз (председателĕ **Ордяков** юлташ). Ку колхоз тырра срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

65. **«Трактор»** колхоз (председателĕ **Ярдушкин** юлташ). Вăл 347 гектар çинчи тырра сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, кĕраки планне 103 процент тултарнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

66. **«Коллективист»** колхоз (председателĕ **Белов** юлташ). Вăл тĕштырăсене сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне акса пĕтернĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

67. **«Трудовик»** колхоз (председателĕ **Майоров** юлташ). Ку колхоз тĕштырăсене 28 кун хушшинче вырса пуçтарнă, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, кĕраки планне 108 процент тултарнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

68. **«Труженик»** колхоз (председателĕ **Меркулов** юлташ). Колхоз тырпул пухса кĕртнĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Великобританин Пичет Усракан Лордне Бивербрук лорда тата Великобританин Промышленность Министрне Оливер Литтлтона 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Великобританирен Совет Союзне çар хатĕрĕсем тăратассине организацилес тĕлĕшпе калама çук паха ĕçсем тунăшăн (çар хатĕрĕсем тăратни вара пĕрлехи тăшмана — гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре нумай пулăшрĕ) çаксене наградăлас:

1-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе

1. Пичет Усракан Лорда — **Бивербрук** лорда.
2. Промышленность Министрне—Оливер **Литтлтона**.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Великобританин тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен аслă командирĕсене Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăласси çинчен

Британипе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсене Ла-Манш урлă каçарса Франције кĕрсе каяс ĕçе калама çук чаплă ертсе пынăшăн, çакна пула Великобританипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çарĕсем, французсен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Германи çарне пысăк поражени тÿстернĕшĕн, Францие Бельги территорийĕсен чылай пысăк пайĕсене тата вĕсен столицисене — Парижпа Брюсселе ирĕке кăларнăшăн, çавăн пекех тата Люксембургпа Голландие кĕрсе кайнăшăн саксене наградăлас:

1-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе

Фельдмаршала **Бернгард Лоу Монтгомерине**

1-мĕш степень УШАКОВ орденĕпе

Адмирала **Бертрам Г. Рамсэя**

1-мĕш степень КУТУЗОВ орденĕпе

Авиацин главнăй маршалне **Траффорд Ли Мэллорие**

Генерал-лейтенанта **Омар Н. Брэдлея**

II-мĕш степень СУВОРОВ орденĕпе

Генерал-лейтенанта Леонарди **Таунсенд Джероуна**

Генерал-майора **Д. Лоутон Коллинса**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Италири 5-мĕш армийĕн командующине Марк Кларк генерал-лейтенанта 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре союзниксен Италири çарĕсен вăрçă ĕçĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе çав тери чаплă ĕçленĕшĕн Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Италири 5-мĕш армийĕн командующине Марк **Кларк** генерал-лейтенанта 1-мĕш степень **Суворов** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕ.

Эстони ССР Совнаркомĕн Председателĕ пулма А. Веймер юлташа уйăрса лартнă

ТАЛЛИН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Эстонин Советлă Социализмлă Республикин Верховный Совечĕн Президиумĕ Эстони ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ пулма А. Веймер юлташа уйăрса лартнă.

Н. Г. Каротамм юлташ—Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ

ТАЛЛИН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ пленумĕ Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Н. Г. Каротамм юлташа суйланă.

Предприятисемпе колхозсенчи Октябрь уявě умěнхи социализмлă ăмăрту

Хěрлě Çар воинěсен тылри тăванěсем фронтпа çěршыва мěн кирлине пěтěмпех парса тăрассишěн вăя шеллемесěр ěçлеççě. Совет Союз Геройěн Сапожников юлташăн йăмăкě Мария Сапожникова, Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ватерщица пулса ěçлесе, нормăна куллен ирттерсе тултарать.

Укерчěк çинче: ватерщица-стахановка Мария Сапожникова юлташ.

С. ФРИД фотоўкерчěкě.

Кěрхи çěртме тумалли нормăсене тултарнăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн премисем параççě

СССР Совнаркомě йышăннă тăрăх, МТС-семпе колхозсенче кашни тракторпа, кашни лашапа, кашни пěр мăшăр вăкăрпа кěрхи çěртме сухаламалли сезонри нормăсем туна.

Колхозсен правленийěсене çапла тума сěннě: кěрхи çěртме тумалли сезонри нормăна тултарнă трактористсене 60 ěçкунě таран преми памалла, çав нормăна ирттерсе тултарсан, нормăран ытлашши сухаланă кашни гектаршăн ěçкунěсем 1,5 хут ўстерсе памалла.

Трактористсене вěсем кěрхи çěртме тунă çěрте ěçлесе илнě кашни ěçкунěшěн натурăпа памалли минимум шутěнчен аванспа пěр килограмран кая мар тěштырă пама юрать.

Кашни лашапа тата мăшăрлă кўлнě вăкăрсен кашни мăшăрěпе кěрхи çěртме тумалли сезонри нормăна тултарнă колхозниксене 10 ěçкунě чухлě преми памалла, нормăна ирттерсе тултарсан, нормăран ытлашши сухаланă кашни гектаршăн ěçкунěсем икě хут ўстерсе çыраççě. (ТАСС).

Юсанса ура çине тăракан Одесса çинчен киноочерк пичетлеççě

Кинохроникăн Украинăри студийě Октябрь уявě тěлне Одесса хулине юсаса ура çине тăратнине кăтартакан киноочерк пичетлесе кăларать. Çав фильм Одессăри ěççыннисем хăйсен герой-хулине куллен паттăррăн ěçлесе юсанине кăтартать.

Укерчěк çинче: Чурачăк районěнчи «Победа» колхозăн счетоводě А. С. Сергеев юлташ. Çак ěçе Отечественнăй аслă вăрçăран аманса тавăрннă хыççăн тытăнса, ăна кăтартуллă туса пырать. Вăрçăра та вăл тăшмана хирěç паттăррăн çапăçнă. Ăна правительство уншăн «За отвагу» медаль парса наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоўкерчěкě.

Канашри депо коллективěн çитěнěвě

КАНАШ, октябрěн 5-мěшě. (Телефонпа). Уяв умěнхи ăмăртура депо коллективě çěнě çитěнўсем тăвать. Вăл, сентябрь уйăхěнчи плана пур тěлěшпе те ирттерсе пурнăçа кěртсе, Хусан чугун çулě çинче иккěмěш вырăна тухнă.

Депори машинистсемпе рабочисем хăйсем илнě обязательствăсене ăнăçлăн тултарса пыраççě. Машинистсем Ермошкинпа Леонтьев юлташсем поездсене çўретмелли плана 200-шер процента яхăн тултарнă. Вěсем çирěм кун хушшинче 13.950 килограмм топливо перекетленě. Машинист-орденоносец Николаев юлташ плана ирттерсе тултарнипе пěрлех 15.103 килограмм топливо перекетленě. Егоров машинист та вěсěнчен нумай кая юлмасть.

Депори Киров ячěпе тăракан колоннăри машинистсем стахановла хăвăртлăхпа ěçлеççě. Вěсем поездсене хăвăрт çўретеççě, паровозсене лайăх пăхса усраççě. Сентябрь уйăхěн юлашки çирěм кунě хушшинче кăна вěсем 39.127 килограмм топливо перекетленě.

Депо коллективě ěçри брака пěтěмпех пěтернě. Сентябрь уйăхěнче йывăр составлă поездсем чылай ăсатнă.

Паровозсене юсанă çěрте ěçлекен рабочисем хушшинче икшер норма тултаракансен хисепě ўссех пырать. Çапла, сентябрь уйăхěнчи плана Литвин юлташ 340 процент ытла, Афанасьев юлташ 224 процент, Конев юлташ 200 процент таран пурнăçа кěртнě. Депори дежурнăй Г. Павлов юлташ паровозсем простой тăвассине нумай чакарнă.

Депори машинистсемпе рабочисем, пěрпěринпе ăмăртса ěçлесе, уява çěнě çитěнўсем тунипе кěтсе илессишěн кěрешеççě.

П. СИМОНОВ,
Депо начальникěн заместителě.

Стахановла вахтăна тăраççě

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ěçлекен заводри нумай цехсен коллективěсем тата комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем, Октябрь уявне чаплă çитěнўсемпе кěтсе илес тесе, стахановла вахтăна тăраççě. Дергачева юлташ ертсе пыракан çамрăксен бригади, вахтăна тăрса, куллен-хи нормăна 180 процент таран тултарма сăмах панă. Халě вăл хăйěн сăмахне чыслăн пурнăçа кěртсе пырать. Бригадăри уйрăм çамрăксем нормăна 200 процент ытла тултараççě.

Дергачева юлташ ертсе пыракан бригадăн пуçарăвне нумай бригадăсем йышăнчěç. Çапла, Л. Черепанова, Бурлакова, Севрикеева, П. Черепанова, Федорова юлташсен бригадисем те стахановла вахтăна тăнă. Федорова юлташăн бригадинчи Лесина, Куборева, Сюсюкина юлташсем икшер-вицшер норма тултараççě.

Чылай цехсенче стахановла вахтăна тăнă рабочисем мěнле ěçленине шута илсе пыма постсем организациленě. Вěсем малта пыракансен опытне сарма пулăшаççě.

Пултарулла руководитель

Колхоз малта пырасси, ялхуçалăх ěçěсене вăхăтра туса ěлкěртесси тата государство умěнчи парăмсене срокра пурнăçласси колхоз председателěн ертсе пырас пултарулăхěнчен нумай килет.

«Красный Октябрь» колхоза пултарулла председатель, ялсовет депутачě Федосия Ивановна Охандерова ертсе пырать. Ăна иртнě çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илнěшěн Чăваш АССР Верховный Советěн Президиумě хăйěн Хисеплě грамотипе наградăларě.

Вăл ертсе пыракан колхоз ялсоветěнче малти ретре тăрать. Колхозниксем государство умěнчи пур обязательствăсене те срокченех пурнăçларěç.

Охандерова юлташ, колхозра кирек мěнле ěç тумалла пулсан та, правлени членěсемпе канашлать. Ватă колхозниксен кăтартăвěсене яланах шута илет. Час-часах кирлě ыйтусене колхозниксен пěрлешўллě пухăвěсенче сўтсе-явма лартать.

Ялхуçалăх артелěн сталинла уставě кăтартнă тăрăх, кашни уйăхрах 2 хутран кая мар правление пухса калаçать, унта конкретлă решенисем йышăнса, вěсене мěнле пурнăçласа пынине яланах тěрěслесе тăрать. Ларусенче мěнле ыйтусем сўтсе-явасси çинчен колхозниксене малтанах пěлтерет. Ларăва 15—30 çынтан кая мар пухăнать. Çапла Охандерова юлташ яланах активпа пěрле ěçлет. Çавăнпа та ăна колхозниксем юратаççě, хисеплеççě.

Вăл колхозри ертсе пырас ответлă ěçсене нумай хěрарăмсене явăçтарчě ěнтě. Колхозра кладовщик, весовщик, счетовод тата 2 бригадир пулса хěрарăмсем ěçлеççě. Ку колхозницăсем вăрçăчченех ответлă ěçсенче пулман. Çавăн пекех Охандерова юлташ Отечественнăй аслă вăрçă инваличěсене те колхоза ертсе пырас ěçрен аякка тăратса хăвармасть. Вěсенчен кашниех хăйсем пултарнă таран ответлă ěçсенче ěçлеççě.

Охандерова юлташ колхоз ěçне уйрăм специалистсене те явăçтарнă. Ěçе çакăн пек тěрěс йěркеленипе пула колхоз пур енěпе те малта пырать.

И. МЕДВЕДЕВ,
Етěрне районěнчи Мăн Йěкěт ялсовечěн председателě.

Колхозсем ăмăртăва хутшăнаççě

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрěн 5-мěшě. (Телефонпа, хамăр корр.). ВКП(б) Обкомěн «Республикăра авăн çапас ěç çитеменлěксěр пыни çинчен» йышăннă постановленине тата Саратов облаçěнчи Воскресенски районри Калинин ячěпе тăракан ялхуçалăх артелěн колхозникěсемпе колхозницисем Октябрь уявě умěнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чěнсе каланине пичетлесе кăларнă хаçатсене илнě хыççăн халě районри колхозсенче пухусемпе канашлусем пулса иртеççě. Кашни колхозрах Саратов колхозникěсем чěнсе каланине ырлаççě, ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илеççě.

Алманчăри «Правда» колхоз членěсем, ăмăртăва хутшăнса, октябрěн 8-мěшě тěлне, «Красное Сормово» колхоз членěсем октябрěн 10-мěшě тěлне кěрхи çěртме туса пěтерме йышăнчěç. Районри 20 колхоз ытла авăн çапса пěтернě. Нумай колхозсенче авăна октябрěн 10—15-мěшě тěлне çапса пěтерме обязательство илеççě. Районри колхозсем кантăр тата йěтěн татса пěтерчěç. Вěсене çапса шыва хутрěç.

Паян ВКП(б) райкомě партипе совет активне пухса канашлу ирттерчě. Вěсем паянах Калинин ячěпе тăракан колхоз членěсем чěнсе каланине ăнлантарса пама колхозсене тухса каяççě.

С. ШАДИН.

Трактористсем уяв умěнхи ăмăртура

Октябрьски МТС-ěн коллективě, Октябрь уявě умěнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ěç тухăçлăхне чылай ўстерчě. Уйрăм трактористсем хăйсем илнě обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççě. Çапла, 7-мěш трактор бригадинчи тракторист Егоров юлташ кěраки планне 200 процент тултарма обязательство илнě. Хăйěн сăмахне вăл пурнăçланă та ěнтě. 40 гектар сухалас вырăнне 120 гектар сухаласа, вăл плана 300 процент тултарнă. Егоров юлташ çавăн пекех çураки вăхăтěнче те начар ěçлемен. Хăйěн тракторне яланах тирпейлě тыткаланипе, вăл çулталăкри плана 180 процент тултарнă, горючи нумай перекетлесе хăварнă. Сергеева, Андреева, Прокопьева, Артемьева трактористкăсем те çулталăкри плана 150—160 процент таран тултарнă.

МТС-ра пурě 8 бригада. Вěсем хăйсем илнě обязательствăсене пурнăçа кěртессишěн тăрăшса ěçлеççě. Коммунист Васильев юлташ ертсе пыракан 7-мěш бригада çулталăкри плана 93 процент, 8-мěш бригада (бригадирě коммунист Верхилеев) 91 процент, 5-мěш бригада (бригадирě коммунист Атлашкин) 82 процент тултарнă.

Тракторист Макаров юлташ (5-мěш бригада) «КИМ» колхозра сентябрь уйăхěн вěçěнче авăн çапма тытăннă. Çапма тытăннăранпа унăн молотилки пěрре те чěмěрěлмен. Вăл унта пěтěмпе 180 тонна тырă çапнă ěнтě. Çавăн пекех 2-мěш бригадăри тракторист Никитин юлташ ěçлекен молотилка та Кутемерти «Коммунизм» колхозра пěр чарăнмасăр ěçлет.

Анчах пур трактор бригадисемпе трактористсем те тикěс ěçлеççě теме çук-ха. Уйрăмăнах 1-мěш бригада (бригадирě Шаронов) юлса пырать. Трактористсем хăйсен машинисене техника тěлěшěнчен йěркеллě пăхса тăмаççě. Çавна пула трактористсем час-часах çěмěрěлеççě те ěçлемесěр лараççě. Ку бригада халиччен 90 тонна çеç çапнă, планпа 500 тонна тырă çапса пуçтармалла. Афанасьев юлташ ертсе пыракан 4-мěш бригада та начар ěçлет. Çулталăкри плана вăл çуррине те тултарайман.

Хăшпěр бригадăсем начар ěçленине пула (ěç дисциплини çук пирки, тракторсене техника енчен çитменлěксěр пăхса пынă пирки) МТС çулталăкри плана 65 процент çеç тултарнă. Кěраки тунă çěрте 9 трактор ěçлет. Вěсем планпа 1.400 гектар сухалас вырăнне октябрěн 4-мěшě тěлне 313 гектар çеç сухаланă. 12 молотилкăран 2-шě тракторсен шкифě çуккипе ěçлемесěр лараççě. МТС-ра мастерской çук. Чылай чухне машина чаçěсене тупаймасăр аптăраççě.

Октябрьски МТС-ě çěнě-ха, çавăнпа та МТС коллективěн чылай йывăрлăхсене çěнтерсе пыма тивет. Çěрěç Халăх Комиссариачěн МТС-а тивěçлě пулăшу памалла.

З. МИТРОФАНОВА.
(Хамăр корр.).

Фронтри пек ěçленě çěрте

Чурачăк районěнчи «Шурăмпуç» колхоз иртнě çулта юлса пыратчě. Кунта сахал мар выльăх вилсе пěтнě, колхозра ěç дисциплини япăх пулнă.

Прокопьев юлташ фронтран аманса таврăннă хыççăн ăна председателе суйланă. Вăл чăн малтанах ěç дисциплинине çирěплетес тěлěшпе çине тăрса ěçлеме пуçланă. Туртăм вăйě енчен колхозăн йывăрлăхсем пулнă пулсан та, çуракине вăхăтра ирттерсе, лайăх тырпул туса илнě. Кунта майракаллă шултăра выльăхсене лашасемпе танах ěçе явăçтарнă.

Колхоза малти рете кăларас ěçре çынсене пěлсе вырнаçтарни те нумай пулăшнă. Ферма заведующийě пулма фронтран аманса килнě Я. Алексеев юлташа лартнă. Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěç палăрмаллах лайăхланнă. Колхоз аш-какай, сěт-çу тата ытти парăмсене срокчен парса татнă, 1945 çулшăн та государствăна сěт панă. Фермăна хěл валли лайăх хатěрленě, витесене ăшă каймалла мар юсанă, выльăх апачě çителěклě таран пухса хунă.

Колхозра кая юлнă участоксене çирěплетесси çине тимлěнрех çавăрăнса пăхма тытăннă. Çапла, Степанов юлташа юлса пыракан бригадăна ертсе пыма лартнă. Степанов юлташ колхозниксем хушшинчи массăллă-ăнлантарулла ěçе лайăх йěркеленине пула, çак бригада часах малти вырăна тухать. Вăл тырпула пуринчен малтан вырса пуçтарать, государствăна та тырă ытти бригадăсенчен маларах парса татать.

«Шурăмпуç» колхозра иртнě çул шут ěçне япăх туса пынă, çавăн пирки тырă колхоз амбарне кěричченех нумай сухалса пěтнě. Кăçал вара счетовод ěçне Николаева юлташа суйласа лартнă. Вăл хăйěн ěçне тăрăшса туса пынă май, кашни колхозникпе колхозницăн ěçкунěсене тěрěс шута илеççě.

Колхоз председателě Прокопьев юлташ мěнле те пулин пысăкрах ěç пуçарас чухне ватă колхозниксемпе канашлать. Колхоз председателě тавра яланах ватă колхозниксен çирěп активě пěтěçсе тăрать, вěсем ăна канашпа та, ěçпе те пулăшаççě. Т. Степанов 65 çулта, вăл 10 çул хушши ěнтě письмоносец пулса ěçлет. Анчах та колхоз ěçěнче вăл çамрăксенчен юлмасть. Кăçал вăл 500 ěçкунě тунă.

«Шурăмпуç» колхоз, Октябрь уявě умěнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, государство умěнчи пур тěрлě парăмсене те парса татрě. Халě икě молотилкăпа кунěн-çěрěн авăн çапаççě. Икě бригада авăн çапса пěтерне те ěнтě.

Колхоз, авăн çапнипе пěрлех, кěрхи çěртме сухине те пикенсех тăвать. Колхозниксем октябрěн 10-мěшě тěлне çěртме туса пěтерессишěн тăрăшса ěçлеççě.

В. КРАСНОВ.

Комсомолăн Чкаловски районри активěн пухăвě

Çак кунсенче комсомолăн Чкаловски районри активěн пухăвě пулса иртрě.

Пухура комсомол Чăваш Обкомěн ěçěсем пирки ВЛКСМ Центральный Комитечě йышăннă постановлени çинчен ВКП(б) райкомěн секретарě Никитин юлташ доклад туса пачě. Вăл, районри актива постановленипе паллаштарнă хыççăн, ВЛКСМ Чăваш Обкомěн тата комсомолăн районри организацийěсен ěçěнчи çитменлěхсем çинчен чарăнса тăчě.

Комсомолăн Чкаловски райкомě пуçламěш организацисене çителěксěр ертсе пырать. Комсомолăн «Красное Батырево», Крупская ячěпе тăракан, «Восток» колхозсенчи пуçламěш организацийěсенче кăçалхи апрель уйăхěнчен вара пěр пуху та туса ирттермен. Çавна пула вăл организацисем питех те сўрěк ěçлеççě. Чылай пуçламěш организацисенче пухусене хатěрленмесěр, ячěшěн кăна ирттереççě, пуху решенийěсене те тěплěн çырмаççě тата çав решенисене мěнле пурнăçа кěртсе пынине тěрěслесе тăмаççě. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче ВЛКСМ райкомě те хăй йышăннă решенисене мěнле пурнăçа кěртни çинчен пěрре те сўтсе-явман.

Çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ěçе начар организацилени пула, комсомол организацийěсем вăрахăн ўсеççě. Çапла, 1944 çулта районри 24 пуçламěш организаци пěр çамрăка та комсомол ретне илмен. Районри 58 организацирен 36-шě сахал йышлă организацисем пулса тăраççě. Çамрăксене комсомола илес тěлěшпе уйрăмăнах 7 çул вěренмелли шкулсенчи организацисем начар ěçлеççě. Хăшпěр организацисенче комсомола кěме ыйтса панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмаççě.

ВЛКСМ райкомěн ěçěнчи тепěр çитменлěх вăл комсомол хуçалăхне япăхтарса яни пулать. Сентябрěн 1-мěшě тěлне член укçи парăмě 785 тенке çитнě. Çав парăмăн хисепě уйăхран уйăхах ўссе пырать. Районри 58 пуçламěш организацирен 11-шě кăçалхи çакăр уйăх хушшинче член укçине пачах та хывман. Член укçи пухасси çавăн пек начар пырать. пулин те, комсомол райкомě ку ыйтăва пěрре те сўтсе-явман.

ВЛКСМ Центральный Комитечěн XII-мěш пленумě комсомолăн шкулсенчи ěçне лайăхлатас тěлěшпе йышăннă постановление те кунта çителěксěр пурнăçа кěртсе пыраççě. Комсомол райкомě пионер вожатăйěсене сахал пулăшать. Шкулсенчи организацисем вěренў пахалăхне лайăхлатассишěн тимлěн тăрăшмаççě.

Пренире тухса калакан юлташсем, комсомол ěçне лайăхлатас енěпе чылай сěнўсем пачěç.

А. ТОКАРЕВ.

Хěвеланăç Европăри вăрçă ěçěсем

ЛОНДОН, октябрěн 3-мěшě. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйěсен верховнăй командованийěн штабě паян пичетлесе кăларнă пěлтерўре çапла каланă:

Союзниксен пехотнăй тата танковăй чаçěсем Аахен хулинчен çурçěртерехри районра атака пуçласа янă. Союзниксен çарěсем Вурм шывě урлă каçса кайнă. Гюртгенран хěвеланăçнерехри районра тăшманăн контратакисене сирсе янă.

1.200 йывăр бомбардировщика яхăн (вěсене истребительсем хўтěлесе пынă) Кассельпе Кельн районěнчи промышленность объекчěсене, çавăн пекех тата Гамм хулинчи чугун çул объекчěсене тапăннă.

Голландире союзниксен çарěсем савăлланса кěнě районра вěсен çěр çинчи чаçěсем Мейжель хули еннелле темиçе миля малалла кайнă. Ытти чаçсем Оверлоон хулине ирěке кăларнă. Çав районра тăшманăн темиçе танкне тата танксене хирěç перекен темиçе туппине пěтерсе тăкнă.

Савăлланса кěнě районран хěвеланăçнерехре союзниксем Антверпен — Тернгаут каналěн çурçěр енче тытса илнě территорие аслăлатнă. Тернгаут хулинчен çурçěр-хěвеланăçнелле малалла куçнă.

Люксембургăн кăнтăр-хěвелтухăç пайěнче союзниксен çарěсем Нанси хулинчен çурçěр-хěвелтухăçнерехре Мозель шывě çинче ларакан Гревенмахер хули хěррине çитнě. Гремесэ вăрманне тăшмантан тасатса çитерне. Союзниксен çарěсем Эпиналь районěнче темиçе тěлте малалла куçнă. Унтан кăнтăртарахра Роншан хулине ирěке кăларнă. Нимěçсем хăйсен малти чаçěсем патне çěнě вăйсем илсе пыма хăтланнине сирсе янă, нимěçсене йывăр çухату тўстернě.

Союзниксен авиацийě çěр çинчи чаçсене активлăн пулăшса пынă тата тăшманăн Хěвеланăç Германирипе Голландири вăрçă объекчěсене атакăланă.

ЛОНДОН, октябрěн 3-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçěр тинěс таврашěнчи хěçпăшаллă вăйěсен штабě паян пичетлесе кăларнă пěлтерўре çапла каланă: тăшман вăйлă хирěç тăнине тата çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, Америка армийěн чаçěсем Монгидоро хулине йышăннă. Çав хула Болонья хулине каякан тěп шоссе çулě çинче çулсен паха узелě пулса тăрать. Адриатика тинěсěн çыранěнче çанталăк начар тăни акăлчансен 8-мěш армине вăйлă çапăçма май паман.

Авиаци тăшманăн Цара портěнчи суднисене тата вăрçă объекчěсене пыра-пыра тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйěсен верховнăй командованийěн штабě октябрěн 4-мěшěнче пичетлесе кăларнă пěлтерўре çапла каланă:

Союзниксен Антверпен хулипе Тернгаут хули хушшинчи каналтан çурçěрелле куçса пыракан çарěсем Бреда хулине каякан çул çинче Антверпен хулинчен 8 миля çурçěр-хěвелтухăçнерехре ларакан ял патне пырса тухнă. Тернгаут хулинчен çурçěртерехре Баарле Насау хулине ирěке кăларнă. Союзниксен Аахен хулинчен çурçěртерехри районра наступлени туса пыракан çарěсем майěпен малалла куçса пыраççě. Тăшман хирěç тăма пăрахмасть. Союзниксен çарěсем Гейленкирхен хулинчен 3 миля кăнтăртарахра ларакан Убах хули патне пырса çитнě.

Пěр пин йывăр бомбардировщик ытла, темěн чухлě истребитель хўтěлесе пынипе, нимěçсен Гаггенау хули патěнчи Даймлер-Бенц заводне, Нюрнберг хулинчи танк заводне тата Лахен-Шпейердорф хулипе Гибельштадт хулинчи аэродромсене атакăланă.

ЛОНДОН, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçěр тинěс таврашěнчи хěçпăшаллă вăйěсен штабě октябрěн 4-мěшěнче пичетлесе кăларнă пěлтерўре çапла каланă:

Тăшман хытă хирěç тăрать пулин те, 5-мěш армири американецсемпе акăлчансен чаçěсем По шывěн улăхěпе çаплах малалла куçса пынă. 8-мěш арми секторěнче, начар çанталăк пулнă пирки, вăйлă çапăçусем пулман.

Союзниксен Вăтаçěр тинěс авиацийě 800 вěçеве яхăн тунă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĚ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пěлтерет: октябрěн 4-мěшě ыран тенě чух çěрле «Москито» йышши самолетсем Кассель хулине, çавăн пекех тата Хěвеланăç Германири ытти объектсене те тапăннă.

ЛОНДОН, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пěлтернě: октябрěн 4-мěшěнче ирхине «Ланкастер» тата «Галифакс» йышши бомбардировщиксем, истребительсем хўтěлесе пынипе, нимěçсен Норвегири Берген хулинчи подводнăй лодкисен базине вăйлă тапăннă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрěн 3-мěшě. (ТАСС). Югослави халăхěн ирěклěх çарěн верховнăй штабě çапла пěлтерет: Хěвеланăç Сербире Югослави чаçěсем Мачва районне пěтěмěшпех тăшмантан тасатнă, халě вěсем Шабац хули патне пырса çитнě (Шабац хули Белградран 60 километр хěвеланăçнерехре ларать).

Шумадире ирěклěх çарěн чаçěсем Аранджеловац хулине йышăннă, халě Власотинец хулинче урамсенче çапăçаççě. Расина шывěн секторěнче нимěçсемпе четниксен тата недичевецсен 6.000 салтак таран шутланакан пысăк колоннине аркатса тăкнă.

Хěвеланăç Боснире Банья Лука секторěнче нимěçсен пысăк вăйěсене хирěç çапăçаççě. Тăшман Банья Лука хули патне татса кěме хăтланнисене пурне те сирсе янă.

Македонире Югослави чаçěсем Струмица хулине ирěке кăларнă. Вардар шывěн секторěнче темиçе кун çапăçнă хыççăн, нимěçсем Велес хули патне татса кěнě, вěсен çын пите нумай пěтнě.

Хěвелтухăç Боснире тăшманăн çирěплетнě пысăк пунктне—Прибой хулине тытса илнě.

Далмацире Югослави чаçěсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, Дрниш хули çумěнчи яла кěрсе кайнă. Ирěклěх çарěн чаçěсем Задар (Цара) ятлă хулапа порта тата тинěс-çар базине тип çěр енчен пěтěмпех çавăрса илнě.

Черногорире тăшманăн Грахово гарнизонне çавăрса илнě. Санджакра ирěклěх çарěн чаçěсем, наступлени туса пырса, Лим шывěн пěтěм улăхне ирěке кăларнă тата виçě хула тытса илнě. Плевле хулине хупăрласа илнě.

Славонире Вировитиа секторěнче Югослави чаçěсем усташасен полкне аркатса тăкнă та 40 километр сарлакěш фронтпа Югославипе Венгри чиккине тухнă.

МИХАЙЛОВИЧ ХĚРĚ ЮГОСЛАВИ ХАЛĂХĚН ИРĚКЛĚХ ÇАРĚ ЕННЕ КУÇНĂ

ЖЕНЕВА, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). «Ирěклě Югослави» ятлă радио пěлтернě тăрăх, Сербин ирěке кăларнă пайне Драже Михайлович хěрě пынă. Пырса çитсенех вăл çар влаçěсем патне кайнă та çапла каланă: эпě атте патěнчен тухса тартăм, мěншěн тесен ăна эпě тăван халăха сутакан тесе шутлатăп, тенě. Михайлович хěрě çар командованийěнчен ăна Югослави халăхěн ирěклěх çарěн ретне илме ыйтнă.

Германири лару-тăру

ЛОНДОН, октябрěн 3-мěшě. (ТАСС). Лондонри радио хăйěн Стакгольмри корреспонденчě Макдональд Германирен нумаях пулмасть таврăннă виçě шведпа калаçни çинчен пěлтерет. Çав шведсем гитлерла Германири пурнăç çинчен каласа панă.

Вěсем каланă тăрăх, Германири предприятисенче рабочисем куллен 12 сехетрен кая мар ěçлеççě, вěсен канмалли кунсем çук. Союзниксен авиацийě час-часах пыра-пыра тапăннине пула, Германире чугун çулсем тата хулари транспорт йěркерен тухнă. Рядовой нимěç рабочийěсем подвалсенче е бараксенче пурăнаççě. Тěрлě чир-чěр питě вăйлă саралнă. Апат-çимěç тěлěшпе пурнăç уйăхсеренех начарланса пырать.

Германири халăх вăрçăра Германи аяла пулнине ытларах та ытларах ěненсе пырать. Гитлер пропагандине халь никам та ěненмест ěнтě. Нимěçсем нумайěшě, хăйсене персе вěлерессрен хăрамасăр, вăрçă ěçěсем çинчен ют çěршывсенчи радиостанцисем пěлтерекен хыпарсене вăрттăн итлеççě.

ГИТЛЕРЛА ХАÇАТ НАЙКĂШНИ

СТОКГОЛЬМ, октябрěн 3-мěшě. (ТАСС). Гитлерла хаçатсем юлашки вăхăтра хыттăн йынăшма та найкăшма тытăнчěç. Нимěçсен «Дас Шварце Кор» ятлă фашистла хаçачě Германири лару-тăру çинчен çырнă статьяра «пирěн кулленхи пурнăç питех те йывăр» тесе палăртать.

Гитлерла хаçат мěншěн-ха çавăн пек найкăшать?

«Тăшман, — тесе çырать вăл, — Европăри крепоçа çěмěрсе кěчě». Çав крепоçа гитлеровецсем никам çěнсе илейми крепость тесе пěлтернě пулнă. «Германие йěри-таврах çавăрса илнě. Тем тума та хатěр тăракан тăшман хаяррăн киле-киле çапнипе Германин хапхисем хăшпěр тěлте кисренчěç те ěнтě» ,— тесе йышăнать хаçат.

Паллах, гитлерла хаçат нимěçсене хăйсен крепоçне кирек мěнле пулсан та тытса тăма чěнет. Анчах хăйěн малашнехи калаçăвěсенче вăл Германин пачах та шанчăксăр лару-тăрăвне пытарса хăварма пултараймасть. Нимěнле хăтăлса тухма çук лару-тăрăва ăнланса илни Германи халăхěн анлă массисем хушшинче ўкěнчěклě шухăш-кăмăлсем çуратать. Германи халăхě хушшинче «çемçешке çынсем, тепěр чухне тата ниме юрăхсăр усал хăравçăсем те» ытларах та ытларах тěл пулни пирки ўпкелешет хаçат. «Халăх ас-тăнне çавăракан сас-хурасем нумай тěрлě вăрттăн шăтăк-çурăксем витěр сăрхăнса кěрсе, юлашки вăйне хурса ěçлекен Германин организмне шалтан хавшатаççě»,—тесе çырать гитлерла хаçат.

ГЕРМАНИРЕ ФРОНТ ÇЫВĂХĚНЧЕН ВЫРĂН ÇИТМЕСТ

СТОКГОЛЬМ, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). «Стокгольмс Тиднинген» хаçат çапла пěлтерет: «Германин хěвеланăç районěсенчи халăха урăх çěре куçарма сасартăк чарса лартнă. Вăл акă мěнрен килнě: Германире çав çынсене вырнаçтарма вырăн çук. Юлашки эрнере 3 миллион çурă халăх хўтлěхсěр тăрса юлнă. Пур шкулсене те фронт çывăхěнчи районсенчен тарса тухнă халăх йышăннă. Малашне çав районсенчен Гитлер партийěн аслă работникěсене, йывăр çын пулнă хěрарăмсене тата хăйсен усал ěçěсемпе уйрăмах палăрнă нимěçсене кăна куçарса кайма ирěк параççě.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ГЕРМАНИРИ БОЛГАРСЕНЕ ИРЕКСĚР МОБИЛИЗАЦИЛЕÇÇĚ

СОФИЯ, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Софири радио пěлтернě тăрăх, Болгарин ют çěршыв ěçěсен министерстви çěнě хыпарсем илнě. Çав хыпарсем тăрăх, Германире пурăнакан болгар рабочийěсемпе студентсене Германи правительстви Болгарие хирěç вăрçма тăвакан отрядсене ирěксěр çырăнтарать е вěсене ирěксěрлесе нимěçсен вăрçă завочěсене ярать. Çавăн пек рабочисемпе студентсем Германире темиçе вунă пин çын шутланаççě. Болгари правительстви: Германи правительстви, çапла хăтланса, Гаага хулинче йышăннă конвенцие пăсать, тесе шутлать. Болгари правительстви халь, Германи правительствин çав ěçěсене хирěçлесе, протест панă.

НИМĚÇСЕМ АНГЛИН КĂНТАР-ХĚВЕЛТУХĂÇ ЕНЧИ ХУЛИСЕНЕ ПЕНИН РЕЗУЛЬТАЧĚСЕМ

ЛОНДОН, октябрěн 2-мěшě. (ТАСС). Лондонри радио çапла пěлтерет: Германин Па-де-Кале проливě урлă Англин кăнтăр-хěвелтухăç енчи çыранне персе тăнă артиллерийě 4 çул хушшинче 2.565 снаряд персе янă. Хуласенчен пуринчен ытла Дувр хули сиенленнě, Дувр хулине 2.000 снаряд ытла лекнě. Унсăр пуçне тата Фолкстен, Дил, Рамсгет хулисем сиен курнă. Тăватă çул хушшинче артиллерирен пенипе Англин кăнтăр-хěвелтухăç çыранěнче мěн пурě 157 çын вилнě.

Лилль хулинче де Голль тухса калани

ЛОНДОН, октябрěн 3-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, де Голль Лилль хулинче (Çурçěр Францире) сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: союзниксем Нормандие çарсем илсе пырса антарнăранпа французсен хěçпăшаллă вăйěсем мěн пурě 125 пин нимěçе тыткăна илнě, тенě. Де Голль малалла çапла каланă:

«Дюнкерка, Лотарингин пěр пайне тата пěтěм Эльзаса ирěке кăлармалла пулать-ха. Çак задачăна пурнăçа кěртсен, эпир каллех Рейн шывě урлă каçса кайăпăр. Пирěн пулас çапăçусене хутшăнмалла. Францин çěнě пурнăç тăвас тěлěшпе ěçлемелле пулать. Промышленность хăватне трестсем пек чăмăрта-чăмăрта лартни урăх пулмалла мар. Паллах ěнтě, Франци вăрçăччен пулнă общество условийěсене каялла тавăрас çук. Государство пěтěм Франци империйěн ресурсěсене тěрěслесе, тишкерсе тăмалла».

Де Голль çапла каланă: общество тěлěшпе анлă программăна пурнăçа кěртěпěр. Пуринчен те пахарах ěç—промышленноçăн чылай пысăк пайне, çав шутра çар промышленноçне, национализацилесси пулать. Хальхи вăхăтра, тенě де Голль, правительствăсем çěр айěнчи пурлăхсемпе уйрăм çынсем усă курнинчен лайăхрах усă курма пултараççě. «Асапсем пире вăйсăрлатас вырăнне çирěплетнине эпир пěтěм тěнчене тата хамăра хамăр кăтартса парăпăр. Эпир Францие çěнěлле йěркелесе ярăпăр», тенě.

Румынири царанистла халăх партийěн исполкомě йышăнни

БУХАРЕСТ, октябрěн 3-мěшě. (ТАСС). «Трибуна Попорулуй» хаçат царанистла халăх партийěн исполкомě пěлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çакна кăтартса панă: анлă дискуссисем пулса иртнě хыççăн, исполком царанистла халăх партине Румынири коммунистсен партийě тунă платформăн проекчě çумне пěрлештересси çинчен решени йышăнчě, тенě. Исполком—çав платформа çěршыври мěнпур демократилле вăйсем нациллě-демократиллě блок ăшěнче пěрлешсе ěçлемелли çирěп никěс пулса тăрать, тесе шутлать.

Пěлтерўре малалла çапла каланă: царанистла халăх партийě—августăн 23-мěшěнче пулса иртнě историллě событисем хыççăн Румынири компарти туса хатěрленě программăн проекчě политикăпа экономика мероприятийěсене тата социаллă мероприятисене тěрěс пěтěçтерсе паракан чаплă программа пулса тăрать, тесе шутлать. Çав мероприятисем Румынин шалти тата тулашри пурнăçěнче радикальнăй реформăсем туса ирттерме май параççě.

Царанистла халăх партийě демократиллě ытти партисенче сўтсе-явма хăйěн программин хăшпěр формулировкисене те кăларса тăратма шутлать.

Бухарестра нациллě-демократиллě блокăн платформине ырланине кăтартма демонстрацисем тăваççě

БУХАРЕСТ, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Румынири нациллě-демократиллě блок платформин проектне (ăна коммунистсен партийě çырса хатěрленě) румын халăхěн йышлă массисем ырлаççě. Çав платформăна национал-царанистсен партийěпе царанистла халăх партийě, патриотсен союзě, «çěрěç фрончě» тата румын писателěсен обществи йышăннă ěнтě. Социал-демократсен партийě те, принцип енчен илсен, ăна йышăннă, анчах вăл халь пěтěмěшле платформа пирки тавлашать.

Октябрěн 1-мěшěнче Бухарест хулин пур районěсенче те рабочисен йышлă демонстрацийěсем пулса иртнě. Вěсене патриотсен союзě организациленě. Демонстрантсем пуринчен ытла нациллě-демократиллě блокăн правительствине тума ыйтнă. Столицăн тăватă районěнче пухнă митингсем пěтнě хыççăн демонстрантсем Университет площадне пухăннă та унта çěнěрен митинг пуçласа янă. Демонстрантсем тата король дворецě умěпе иртсе пынă. Профсоюзсен организациллě комитечěн представителě Георг Апостол сăмах тухса каланă. Вăл çапла пěлтернě: профсоюзсене пěр уйăх хушшинче кăна çěнěрен 150.000 çын ытла кěнě, çав шутран 50.000 çын ытла Бухарестра пурăнаççě, тенě. Ун хыççăн Владеску-Ракоса профессор сăмах тухса каланă. Вăл уйрăмах çакна палăртса панă: нациллě-демократиллě блокăн коммунистсен партийě çырса хатěрленě платформин проектěнче тěп пунктсем çаксем пулса тăраççě: «Гитлерла Германие хирěç пыракан вăрçа Германие çěнтерниpe вěçлесси, Совет Союзěпе тунă перемирин условийěсене тўрě кăмăлпа пурнăçа кěртесси, Совет Союзě тěлěшпе туслă политика тытса пырасси тата хамăр çěршыва демократизацилесси пулса тăрать», тенě.

«Эпир нациллě-демократиллě пур вăйсене те пěрлештерме ыйтатпăр», — тенě Владеску-Ракоса.

СОВЕТ СОЮЗĚПЕ АМЕРИКА ХУШШИНЧИ ТУСЛĂХĂН КОНГРЕСĚН ĚÇĚ

НЬЮ-ЙОРК, октябрěн 4-мěшě. (ТАСС). Америкăпа Совет Союзě хушшинчи туслăхăн наци совечě çапла пěлтернě: Америкăпа Совет Союзě хушшинчи туслăха çулсерен Нью-Йорк хулинче конгресс пухса паллă тăваканччě, кăçал Совет Союзěпе Америка хушшинчи туслăхăн яланхи праçникне ятарласа тунă конференцисем тата массăллă митингсем пухса паллă туса ирттереççě. Америкăпа Совет Союзě хушшинчи туслăхăн наци совечě çак праçнике Пěрлешўллě Штатсенчи пур хуласенче те тěрлě кунсенче туса ирттерет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

комсомолецсемпе çамрăксен кинофестивалě кунěсенче

çакăн пек фильмсем кăтартать:

октябрěн 6-мěшěнче

«С У В О Р О В»

Октябрěн 7-мěшěпе 8-мěшěнче

«ПОДВОДНАЯ ЛОДКА Д—9»

Октябрěн 9-мěшěпе 10-мěшěнче

«В О И М Я Р О Д И Н Ы»

Кашни сеанс умěн лекци пулать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççě:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Государствăпа колхозсен питомникěсем кěркунне лартма улмуççи, груша, чие, хурлăхан, хăмлаçырли, вěрене, тирек, çăка тата акаци йывăççисем кирек мěн чухлě те сутаççě. Çав йывăççисене çак адреспа пырса илмелле: 1) Село Батырево, Чкаловского района, Плодопитомник; 2) гор. Цивильск, Плодопитомник; 3) гор. Чебоксары, Комбинат «Росглаввино».

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарěн — 4—26, парти пурнăç пайěн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайěсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00726.